26-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
МАРТ
5
ВЫРСАРНИКУН
46 (6541) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

Тракторсен паркне ҫураки валли тĕплĕн хатĕрлесе ҫитерер

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннипе тăрăх пыракан фронтовой уйăхлăхăн 10 кунĕ иртрĕ. Ҫак уйăхлăхра, ҫуракине хатĕрлесе ҫитес ĕҫсене пĕр тапхăр, тракторсемпе вĕсем ҫумне пăхарса ĕҫлемелли машинăсене те пĕтĕмпех юсаса ĕҫлеме хатĕрлесе задача тăрать.

Тракторсене юсамалли ҫул тултаракри плана республикипе мартăн 1-мĕшĕ тĕлне 80,8 процент пурнăҫланă. Иртнĕ пиллĕк кун хушшинче тракторсене юсас ĕҫ нурĕ те 3,6 процент чухлĕ кăна ӳснĕ. Ҫакăн пек хăвăртлăх пулсан, тракторсене юсас плана срокра пурнăҫлама май памасть, ҫавăнпа та ҫак ĕҫе никнерех тытăнмалла.

Республикăри пыракан Шăхасан, Комсомольски, Красноармейски, Йĕпреҫ, Елчĕк, Шупашкар тата Ишлей МТС-ĕсем тракторсене юсамалли ҫултаракри плана февраль уйăхĕнченех пурнăҫларĕҫ. Элĕкпе Буславка МТС-сем те мартăн ретне тăма сыхласа пыраҫҫĕ.

Тракторсене юсамалли ĕҫе ӳ вĕҫленĕ МТС-сен условийĕсем уйрăмлах лайăх пулнă теме пирĕн нимĕнле сăлтав та ҫук. [illegible] ответлăха пулса ĕҫлени, ĕҫре социализмла ăмăртăва лайăх йĕркелени, пĕтĕм МТС коллективне ҫак ĕҫ тавра мобилизацилени [illegible].

Тракторсене юсас ĕҫре ĕҫе пысăк ыйтупа пăхакан пысăк мар МТС-сем пур. Вăрнар, Улатăр, Тăвай, Вурнари МТС-сем тракторсене юсас плана [illegible] хушше пирĕн ниме [illegible] кĕреҫҫĕ, вĕсем, республикăри тракторсене юсамалли плана пурнăҫлас ĕҫре чи юлашки вырăнсенче тăраҫҫĕ.

Юсанă тракторсене ĕҫре тĕрĕсленĕ чухне те кăлтăксем пур. Етĕрне МТС-ĕнче февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтернĕ тракторсене тĕрĕсленĕ чухне, вĕсенчен 19-мĕшне япăх юсанă. Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕ февралĕн 13-мĕш ыйтăвне [illegible] пилĕкне [illegible] тĕрĕсленĕ.

МТС-сен руководителĕсем машинăсемпе тракторсене ҫураки валли вăхăтра тата лайăх хатĕрлесе ҫитересси хăйсен ответлă тума ĕҫлеме пулăшаҫҫĕ. Вĕсен ҫакна тума шанчăк ытти [illegible] ресурсĕсене мобилизацилемесĕр, машинăсемпе ĕҫлеме хăйсен организаторсем, правительство кăтартнă срокĕсене туса ҫитерменни юсанă ĕҫсене пахалăхне ҫине уйрăмах тимлĕн ҫаврăнса пăхмалла.

Анчах кунта та ҫитменлĕхсем пур-ха. Шăмăршă МТС-ĕ 26 трактор юсанă, анчах та государство комиссийĕ вĕсенчен пĕрне те йышăнман. Етĕрне МТС-ĕнче юсанă 28 тракторран 2-шне государство комиссийĕ йышăнман, Сĕнтĕр МТС-ĕнче 3 трактора япăх юсанă тесе йышăнман. Кун пек тĕслĕхсем ытти МТС-сенче те пур. Ҫак тĕслĕхсем тракторсене юсас ĕҫре пахалăх ҫине ҫителĕклĕ ҫаврăнса пăхманни ҫинчен калаҫҫĕ. Тракторсене мĕнле юсанине тĕрĕсленĕ чухне ҫиелтен пăхса йышăнма юрамасть, вĕсене хăйсен пайĕсе ĕҫлеттерсе сăнас пулать, тупнă кăлтăка сийĕнчех тӳрлетмелле, унсăрăн вăл кăлтăксем ҫураки кунĕсенче чăрмантарма пултараҫҫĕ.

Правительство заданийĕ тăрăх, тракторсене ҫураки валли запаслă пайсем хатĕрлеме республикăри чылай предприятисене ĕҫлеттерме [illegible]. Сталин ячĕпе тăракан артиллери завочĕ [illegible] тракторсем валли запаслă пайсем хатĕрлесе [illegible].

Республикăри пĕтĕм предприятисем тракторсем валли запаслă пайсем хатĕрлессине [illegible] ĕçе пĕлтерĕшлĕ обязательствăсене тăрăшса пурнăҫлаччăр. Чăваш промкомбинат, Сĕнтĕр, Шăмăршă тата ытти районсенче [illegible].

Республикăри чылай МТС-сенче газогенераторлă тракторсене юсамалли ĕҫсем лайăх пымаҫҫĕ. Вĕсене тивĕҫлĕ юсанине пулма [illegible], тракторсем валли чурккасем хатĕрлемелли ĕҫ те ҫителĕксĕр пырать. [illegible] Улатăр, Сĕмĕрле тата Шăмăршă районĕсенче [illegible] кубометр чурккасем хатĕрлесе [illegible].

Сурхи кунсем ҫывхарасҫĕ. Тракторсене юсамалли ĕҫе тултарас ĕҫ пур вăя хумалла. Юсанă тракторсене колхозсенче тракторсен бригадисене парса, вĕсене тухсене ĕҫре сине ҫитерессе.

Тракторсене вĕсен ҫумне пăхарса ĕҫлемелли машинăсене тĕплĕн юсамалла, тракторсем хатĕр пулсан ҫураки вăхăтĕнче ĕҫлеме вĕсене хатĕр пулмалла. Трактористкăсемпе механиксем, МТС-сен работникĕсем! Пĕтĕм Совет Союзĕпе социализмлă ăмăртăва [illegible], тракторсене срокчен кăна юсаса мар, пахалăхне те тивĕҫлĕ тăвасси ҫине уйрăмах пăхса, ҫураки валли хатĕрлесе ҫитерер. Правительство илтĕр.

Хăвăр илнĕ обязательствăсене вăхăтра та лайăх пурнăҫлассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешĕр! Колхозсем пысăк тухăҫлă тырпул туса илесси, сирĕн ĕҫĕртен те нумай килнине яланах асра тытăр!

РСФСР-ăн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕ

РСФСР-ăн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕн 1944 ҫулхи мартăн 3-мĕшĕнчи ларăвĕ ҫинчен ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРӲ

Ĕнер, мартăн 3-мĕшĕнче, кăнтăрла 11 сехетре, РСФСР Верховный Совечĕн ларусем пулакан залĕнче, Кремльте РСФСР-ăн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕн тăваттăмĕш ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларăва РСФСР Верховный Совет Председателĕн заместителĕ М. В. Сарычева депутат председатель пулса ертсе пынă.

Кун йĕркинче — РСФСР-ăн 1944 ҫулхи государство бюджечĕ ҫинчен тата РСФСР-ăн 1940-мĕш, 1941-мĕш, 1942-мĕш ҫулсенчи государство бюджетне пурнăҫлани ҫинчен тунă доклада сӳтсе-явасси.

Пренире ҫаксем тухса каланă: РСФСР Вăрман промышленность Халăх Комиссарĕ В. Я. Колданов юлташ, Г. В. Ветошкин депутат (Сыктывкар округĕ, Коми АССР-ĕ), РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ Г. В. Перов юлташ, ĕҫсынни депутачĕсен Иваново область Совечĕн исполкомĕн председателĕ Г. Н. Шубин юлташ. РСФСР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕ А. Ф. Третьяков юлташ, депутатсем — Д. Г. Оника (Шахты округĕ, Ростов облаҫĕ), Л. И. Ищенко (Константиновка округĕ, Ростов облаҫĕ). З. И. Сочнева (Шадрински округ, Курган облаҫĕ), РСФСР Коммунальнăй хуҫалăх Халăх Комиссарĕ В. И. Макаров юлташ, РСФСР Халăх Комиссарĕсен Председателĕ А. Н. Косыгин юлташ И. П. Куприянов депутат (Атяшево округĕ, Мордва АССР-ĕ), РСФСР Вырăнти промышленность Халăх Комиссарĕ В. П. Смиряев юлташ.

Ҫакăнпа РСФСР Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕн тăваттăмĕш ларăвĕ хупăннă.

Мартăн 3-мĕшĕнчи ирхи лару

Мартăн 3-мĕшĕнче 11 сехетре РСФСР Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕн тăваттăмĕш ларăвĕ уҫăлнă. Председатель сĕтелĕ хушшинче — РСФСР Верховный Совечĕн Председателĕ А. А. Жданов, РСФСР Верховный Совет Председателĕн заместителĕсем А. Х. Тынчерова М. В. Сарычева депутатсем. Ложăсенче — РСФСР Верховный Совет Президиумĕн членĕсем тата РСФСР Халăх Комиссарĕсем.

Ларăва РСФСР Верховный Совет Председателĕн заместителĕ М. В. Сарычева депутат председатель пулса ертсе пырать.

РСФСР Финанс Халăх Комиссарĕн доклачĕ тата бюджет комиссийĕн содоклачĕ тăрăх пренисем малалла пыраҫҫĕ.

РСФСР Вăрман промышленность Халăх Комиссарне В. Я. Колданов юлташа сăмах параҫҫĕ.

— Вăрçă кунĕсенче, — тет вăл,— вăрман промышленноҫĕн вырăнĕ татах та ӳсрĕ. Халĕ вăрман промышленноҫĕ умĕнче ҫĕнĕ ответлă задачăсем, уйрăмăн илсен, Донец ҫинчи кăмрăк бассейнне йывăҫ материалĕсем ҫителĕклĕ таран хатĕрлесе парас задачăсем тăраҫҫĕ.

Г. В. Ветошкин депутат Коми АССР-ĕнче вăрçă вăхăтĕнчи ҫулсенче строительство ĕҫĕсем анлăн саралса пыни ҫинчен каласа парать.

РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ Г. В. Перов юлташ хăйĕн сăмахĕнче шкулсен, культурăпа ҫутта кăларас тĕлĕшпе тата сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕҫлекен учрежденисен ĕҫĕсем ҫинчен каласа парать.

Иваново область Совет исполкомĕн председателĕ Г. Н. Шубин юлташ Иваново облаҫĕнче вăрçă вăхăтĕнчи ҫулсенче промышленноҫпа ялхуҫалăхĕ ӳссе пыни ҫинчен калакан фактсене илсе кăтартать.

РСФСР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕ А. Ф. Третьяков юлташ социаллă-культурăллă мероприятисене ирттерме укҫа-тенкĕ хывассине ӳстернĕ май, халăх сывлăхне сыхлас ĕҫе малалла ҫĕклеме лайăх условисем пулни ҫинчен каласа парать.

Д. Г. Оника депутат, Мускав сывăхĕнчи кăмрăк бассейнĕнчи примерсене илсе, нимĕҫсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи хуҫалăха юсаса ура ҫине тăратас ĕҫсем анлăн саралса пынине кăтартса парать.

Оника юлташ малалла Мускав сывăхĕнчи кăмрăк бассейнĕнчи горняксен культурăпа йăла условийĕсене лайăхлатас тата коммуналлă хуҫалăха йĕркелес тĕлĕшпе чылай ыйтусем ҫинче чарăнса тăрать.

Л. И. Ищенко депутат нимĕҫсен фашистла захватчикĕсем ишĕлтернĕ хуҫалăха юсаса ура ҫине тăратас тĕлĕшпе Ростов облаҫĕнчи рабочисемпе колхозниксем тата интеллигенци вăя шеллемесĕр ĕҫлени ҫинчен каласа парать. Ростов облаҫĕн бюджечĕ, иртнĕ ҫулхипе танлаштарсан чылаях ӳснĕскер, хуҫалăха юсаса ура ҫине тăратас тĕлĕшпе тумалли ĕҫсене татах та анлăнрах сарса пыма май парать.

З. И. Сочнева депутат тылри колхоз хресченĕсем фронта, Хĕрлĕ Ҫара мĕнле пулăшни ҫинчен каласа парать.

Сочнева депутат Курган облаҫĕнче вырăнти тата аш-какай промышленноҫне аталантарас ыйтăва лартать. Унта ҫав промышленноҫа аталантарма пуян резервсем пур. Малалла Сочнева юлташ РСФСР Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариачĕн ĕçне ҫивĕччĕн критиклет.

РСФСР Коммуналлă хуҫалăх Халăх Комиссарĕ В. И. Макаров юлташ партипе правительство, вăрçă вăхăтне пăхмасăр, хуласене лайăхлатас, коммуналлă хуҫалăха малалла аталантарас тата ĕҫсыннисен пурнăҫ ыйтăвĕсене тивĕҫтерес тĕлĕшпе куллен тимлĕн тăрăшнине палăртать.

— 1944 ҫулхи бюджет тăрăх укҫа-тенкĕ хывма палăртни, — тет Макаров юлташ, — пирĕн республикăри коммуналлă хуҫалăха малалла аталантарса, лайăхлатса пыма май парать.

1943 ҫулта РСФСР-ти ирĕке кăларнă районсенчи хуласенче пурăнмалли ҫурт-йĕрсемпе коммуналлă хуҫалăха юсас тĕлĕшпе пысăк ĕҫсем тунă. Курск, Орел, Воронеж, Калинин, Ленинград, Ростов, Смоленск облаҫĕсенчи, Ставрополь, Краснодар крайĕсенчи хуласемпе рабочи поселоксенче кăна пурăнмалли ҫуртйĕрсене 3.648.943 тăваткăл метр чухлĕ юсанă. Хуласенче пурăнакан 660.000 ҫын ытла землянкăсемпе сарайсенчен тата подвалсенчен лайăх хваттерсене куҫнă. 1944 ҫулта ку ĕҫ татах та анлăнрах саралмалла. Ҫакна тума строительство трестĕсен производствăллă-техникăллă базине ҫирĕплетмелле, строительство ĕҫĕсене механизацилесе хăвăртлатмалла, строительство кадрĕсене хатĕрлессине вăйлатмалла.

Кун хыҫҫăн РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне А. Н. Косыгин юлташа сăмах параҫҫĕ.

— Пирĕн республикăн бюджечĕ, —тет Косыгин юлташ, — совет халăхĕн интересĕсене, нимĕҫсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçă интересĕсене пăхăнса тăрать. Ун ҫинчен кунта тухса калакан депутатсем бюджета ырлани те уҫăмлăн каласа парать.

Отечественнăй вăрçă материалсемпе укҫа-тенкĕ ресурсĕсене оборона ыйтăвĕсене тивĕҫтернĕ ҫĕре мобилизацилеме, хамăрăн совет ҫĕршывĕн пĕтĕм хуҫалăх пурнăҫĕнче перекетлĕх режимне ҫирĕппĕн тытса пыма хушрĕ. РСФСР-ти промышленность 1943 ҫулта продукци туса кăлармалли плана срокчен тултарчĕ. Колхозсемпе совхозсем, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăр, Хĕрлĕ Ҫарпа тыла— апат-ҫимĕҫсем, промышленноҫа — чĕртавар парас задачăсене ăнăҫлăн пурнăҫа кĕртрĕҫ. Нимĕҫ захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи хуҫалăха юсаса ура ҫине тăратас тĕлĕшпе пысăк ĕҫсем туса ирттернĕ.

Хальхи вăхăтри ответлă задачăсенчен пĕри вăл ҫуракине тĕплĕн хатĕрленсе, ăна ăнăҫлăн ирттересси пулать. Ĕҫ планĕсене тума, колхозсенчи бригадăсемпе звеносене ĕҫ вăйĕ ҫителĕклĕ таран уйăрса пама, вĕсем ҫумне инвентарь тата туртăм вăйĕ ҫирĕплетсе пама халех тытăнас пулать. Тракторсемпе ялхуҫалăх инвентарьне сывăх вăхăтсенчех юсаса ҫитермелле. Сталин ячĕпе тăракан артиллери завочĕ хăй шефа илнĕ МТС-а пулăшас тĕлĕшпе пуҫарнă ĕҫе пĕтĕм республикăра анлăн сармалла.

— Пирĕн республика умĕнче, — тесе пĕтерет хăйĕн сăмахне Косыгин юлташ, — 1944 ҫулта пысăк та ответлă задачăсем тăраҫҫĕ. Вĕсене пурнăҫа кĕртес тесен, халăхăн пĕтĕм вăйне мобилизацилемелле. Иккĕленмелли ҫук, совет ҫыннисем вăй-хăвата шеллемесĕр ĕҫлени ҫав задачăсене чыслăн пурнăҫа кĕртме май парĕ. Ҫапла вара, аслă Сталин юлташ ертсе пынипе, хамăрăн Хĕрлĕ Ҫар нимĕҫ захватчикĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех ҫĕмĕрсе тăкĕ, хамăрăн совет ҫĕршывне нимĕҫ ирсĕрĕсенчен тасатса ҫитерĕ.

И. Н. Куприянов депутат Мордва АССР-ĕн 1944 ҫулхи бюджечĕ, 1943 ҫулхипе танлаштарсан, чылай ӳснине тулли кăмăлпа палăртать. РСФСР Вырăнти промышленность Халăх Комиссарĕ В. П. Смиряев юлташ депутатсем вырăнти промышленность ĕçне критиклениме тĕрĕс тесе йышăнать.

— РСФСР-ăн вырăнти промышленноҫĕ умĕнче, — тет вăл, — 1944 ҫулта ответлă задачăсем тăраҫҫĕ. Уйрăмăнах промышленноҫа яллă вырăнсенче аталантарас, тумтирсемпе атă-пушмаксем юсакан мастерскойсен йышне ӳстерес тата чĕртаварсен базине тăвас ыйту паллă вырăн йышăнса тăрать.

Ҫакăнпа РСФСР Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕн тăваттăмĕш ларăвĕ хупăнать. (ТАСС)

СССР Верховный Совечĕн Х-мĕш сессийĕн итогĕсене сӳтсе-явма пухнă пуху

Виҫĕм кун пĕр заводра рабочисемпе служащисен тата инженерла-техникла работниксен пухăвĕ пулчĕ, ăна СССР Верховный Совечĕн Х-мĕш Сессийĕн итогĕсене сӳтсе-явма пухнă. Пухура 500 ҫын ытла пулчĕ. СССР Верховный Совечĕн депутачĕ И. М. Чарыков юлташ доклад туса пачĕ.

Пухури ҫынсем Чарыков юлташăн докладне питĕ тимлĕн итлерĕҫ. Чарыков юлташ сессире сӳтсе-явнă ыйтусем ҫинчен, вăл йышăннă постановленисем ҫинчен каласа пачĕ, ҫав постановленисем вăрçăпа политика енчен государствăшăн тата пĕтĕм тĕнчешĕн питĕ паха постановленисем пулса тăнине палăртрĕ.

— Гитлерла Германипе вăрçма пуҫланăранпа пирĕн ҫĕршыв тата ытларах хăватланчĕ, — тет Чарыков юлташ. — Сесси йышăннă 1944 ҫулхи бюджет, Оборона Халăх Комиссариачĕпе Ютҫĕршыв Ĕҫĕсен Халăх Комиссариатне пĕтĕм Союз комиссариачĕсенчен союзлă республикăсен комиссариачĕсем туса хуни совет государстви тĕрекленнине, совет халăхĕсем фашистла нимĕҫ захватчикĕсене хирĕҫ вĕсене ҫĕнтеричченех ҫапăҫма хатĕррине кăтартса параҫҫĕ. Аслă ҫулпуҫ тата полководец Сталин юлташ ертсе пынипе совет халăхĕ тăшмана аркатса тăкĕ.

Чарыков юлташ завод коллективне фронт валли тата ытларах продукци туса пама, ылханлă фашистла нимĕҫ вăрăсапа хурахĕсене ҫĕнтерес ĕҫе тата хавхаланарах туптаса пыма чĕнчĕ.

Чарыков юлташăн доклачĕ тăрăх нумай ҫынсем сăмах тухса каларĕҫ. Стахановец-орденоносец Голубчиков юлташ ҫапла каларĕ:

— Сессин решенийĕсене пĕр пăрланмасăр пурнăҫа кĕртсе пыни пирĕн тăшмана хăвăртрах аркатса тăкма пулăшĕ. Ҫав решенисене ответлесе, эпир тылри боецсем, тата ытларах вăй хурса ĕҫлĕпĕр, фронта ҫапăҫма кирлĕ продукци ытларах та ытларах парса тăрăпăр.

— Производство заданийĕсене пурнăҫлассишĕн кĕрешсе, пирĕн цехăн коллективĕ чăннипех фронтри пек ĕҫлет, — терĕ стахановка Рыжкова юлташ. — Ҫынсем час-часах цехран тухмасăр 15—18-шар сехет ĕҫлеҫҫĕ, 3—4-шар норма тултараҫҫĕ. Ҫакна пула пирĕн цех хăйĕн планне нумай ирттерсе тултарать. Анчах эпир хамăр тунă ҫитĕнӳсемпе лăплланса лармастпăр. Хамăр цехăн коллективĕ ячĕпе эпĕ ҫапла шантарса калатăп: Сессин историллĕ решенийĕсене ответлесе, эпир март уйăхĕнче февральтен ытларах продукци туса парăпăр.

Завод начальникĕ хайĕн сăмахĕнче ҫакна палăртрĕ: паттăр Хĕрлĕ Ҫар ăнăҫлă наступлени туса пынипе хавасланса, завод коллективĕ хăй туса кăларакан продукцин хисепне ӳстерсе пырать, унăн пахалăхне лайăхлатса пырать. Февральти производство программине ирттерсе тултарнă. Февраль уйăхĕнче ĕҫ тухăҫлăхĕ чылай ӳсрĕ.

— Сессин решенийĕсем пурне те ĕҫри хастарлăха икĕ хут, виҫĕ хут ӳстерме хушаҫҫĕ, — терĕ завод начальникĕ. — Эпир фронта тата лайăхрах та тата ытларах продукци пама пултаратпăр, памалла та.

СССР Верховный Совечĕн депутачĕ Чарыков юлташ тунă доклад тăрăх завод коллективĕ Сессин решенийĕсене пĕрсаслăн ырларĕ тата фронта ытларах пулăшма сăмах пачĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 3-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 3-мĕшĕнче пирĕн ҫарсем НАРВА хули енче НАРВА хулинчен кăнтăрхĕвеланăҫнерехри плацдарма аслăлатассăн ҫапăҫнă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

ПСКОВ хули енче пирĕн ҫарсем, тăшман хирĕҫ тăнине ҫĕнтере-ҫĕнтере, ҫаплах малалла тапăнса пынă, МАРКОВО, БОЛЬШОЕ СОФОМКИНО, МАЛОЕ СОФОМКИНО, ЯЗЫКОВА, СОРОКИНО, СТАРУХИНО, ПОХВАЛЬЩИНА, РАМЕНЬЕ, ЛЕТНЕВО, БАЕВО, СЫСОЕВО ялĕсене тата ДОБРОВЕДКИ, КЕБЬ чугун ҫул станцийĕсене туртса илнĕ.

ОСТРОВ хули енче пирĕн ҫарсем ҫапăҫса малалла тапăнса пына, ЗАГАРЬЕ, КРАСНЫЕ ПРУДЫ, СТРЕЛКОВО, ПОДБЕРЕЗЬЕ, ОВЕЧКИНО, СЕЛИВАНОВКА ялĕсене тата КРАСНЫЕ ПРУДЫ, ЖЕЛЕЗОВСКИЙ чугун ҫул станцийĕсене тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса ҫӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн ҫапăҫнă.

Мартăн 2-мĕшĕнче пирĕн ҫарсем мĕнпур фронтсенче нимĕҫсен 35 танкне ҫĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри ҫапăҫусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 45 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Нарва хули енче пĕр соединени боецĕсем нимĕҫсене шурлăхлă вырăнти вăйлă ҫирĕплетнĕ позицисенчен ҫапса кăларнă. Ҫак участокра икĕ кун хушши пынă ҫапăҫусенче тăшманăн 200 салтакĕпе офицерне ҫити пĕтерсе тăкнă. Нимĕҫсенчен 14 тупăпа миномет, 80 пулемет, 100.000 патрон тата ҫар пурлăхĕн 3 складне тытса илнĕ. Тепĕр районра пирĕн стрелоксемпе автоматчиксем тăшмана ҫаврăнса илнĕ те хыҫалтан тата флангсенчен пыра-пыра ҫапса, нимĕҫ оборонин тĕреклĕ пунктне туртса илнĕ. Ҫапăҫу хирĕнче гитлеровецсен 300 вилли ытла выртса юлнă. 3 тупă, 28 пулемет, винтовкăсемпе автоматсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Псков хули енче пирĕн ҫарсем тăшманпа ҫапăҫса ҫаплах малалла тапăнса пынă. Псков хули патне пымалли вырăнсенчи ялсемпе станцисене тăшман хăйĕн оборонин хăватлă узелĕсем туса хунă, питĕ хытă персе тăрать. Пĕр соединени чаҫĕсем, ҫав тери хăвăрт пырса ҫапса, нимĕҫсене темиҫе тĕреклĕ пунктран хĕссе кăларнă. Ҫав пунктсемшĕн пынă ҫапăҫусенче 800 нимĕҫ салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 9 танк, 16 тупă, тата минометсен 7 батарейине пĕтерсе тăкнă. Красноармеец Ислам Айтмухамбетов казах, хăйĕн пулемечĕпе персе, наступлени тăвакан стрелоксене пулăшса тăнă. Тăшман контратакăна кĕрсе кайсан, Айтмухамбетов ăна сывăхах янă та пулеметпа пеме пуҫланă, темиҫе вунă гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Пĕр ялта пирĕн боецсем нимĕҫсем Германи каторгине хăваласа каякан 4.000 совет гражданне ирĕке кăларнă.

* * *

Остров хули енче пирĕн ҫарсем вăрманлă-шурлăхлă вырăнти йывăр условисенче тăшманпа ҫапăҫнă хыҫҫăн халăх пурăнакан темиҫе пункта туртса илнĕ. Ҫав пунктсенчен пĕринче нимĕҫ пехотин 3 ротине саваpса илсе пĕтерсе тăкнă. 4 тупă, 38 пулемет тата пĕр боеприпас склачĕ тытса илнĕ. Пирĕн тепĕр соединени боецĕсем тăшмана ҫĕрле атакăланă та паха позицисем туртса илнĕ. Пирĕн боецсем ҫав тери сасартăк пырса ҫапнипе, нимĕҫсен питĕ васкаса каялла чакма лекнĕ, вĕсем хăйсен мĕнпур хĕҫпăшалне пăрахса тарнă. Каялла чакакан тăшман ҫапăҫу хирĕнче хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен 200 виллине ытла пăрахса хăварнă.

* * *

Барановичи облаҫĕнче кĕрешекен белорусс партизанĕсен темиҫе отрячĕ пĕр уйăх хушшинче нимĕҫсен 40 ҫар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Темиҫе вунă паровоз тата 260 вагонпа платформа ҫĕмĕрĕлнĕ е сиенленнĕ. Унсăр пуҫне, совет патриочĕсем 11 кĕпере сирпĕнтерсе янă, телеграфпа телефон ҫыхăнăвĕн линине 92 километр пăсса тухнă, тăшманăн 4 пысăк складне ҫунтарса янă.

* * *

Венгрире пуҫ пулса тăракан шайкка венгер ҫарĕсем Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчи ҫапăҫусенче нимĕҫсем майлă пулса вăрҫнине халăхран пытарса усрама хăтланчĕ. Тĕнчери халăха улталас шухăшпа Будапешт хулинче темĕн чухлĕ опроверженисем ҫыра-ҫыра кăларчĕҫ. Анчах та совет ҫарĕсем тыткăна илнĕ венгер пехотинецĕсем, танкисчĕсем тата летчикĕсем Гитлерăн Будапештра ларакан хӳрешкисен усал суйăне тăрă шыв ҫине кăларчĕҫ. Пуриншĕн те ҫакă питĕ уççăн палăрчĕ: Венгри ҫарĕсем Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчи малти позицисенче совет ҫарĕсене хирĕҫ ҫапăҫаҫҫĕ. Суйăп пуриншĕн те паллă пулнă хыҫҫăн Венгри пуҫлăхĕсен ҫакна ирĕксĕрех йышăнмалла пулчĕ: нимĕҫсем вăхăтлăха тытса илнĕ совет территорийĕнче Венгри ҫарĕсем чăнахах та пур, анчах та,— теҫҫĕ венгри гитлеровецĕсем, — вăл ҫарсем вăрҫмаҫҫĕ, «хурал кăна тăраҫҫĕ», теҫҫĕ.

Венгри дивизийĕсем фронтăн малти позицийĕсенче Совет Союзне хирĕҫ нимĕҫсем майлă пулса ҫапăҫаҫҫĕ, вĕсен тепĕр пайĕ нимĕҫсем вăхăтлăха тытса илнĕ совет районĕсенче чăнахах та «хурал» тăраҫҫĕ.

Анчах та Венгрин ҫав «хурал тăракан» чаҫĕсем мĕн тăваҫҫĕ-ха вĕсем, нимĕҫсен ҫулйĕрĕсене тата ҫар объекчĕсене камран сыхлаҫҫĕ-ха вĕсем? Венгри сутăнчăкĕсем, хуралта тăракан йытăсем пек, нимĕҫсен тылне совет патриочĕсенчен сыхласа тăраҫҫĕ. Совет патриочĕсем хăйсен тăван ҫĕршывĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн нимĕҫ захватчикĕсемпе хăйсене хăйсем хĕрхенмесĕр паттăррăн ҫапăҫаҫҫĕ. Совет ҫыннисем нимĕҫсен «хуралĕ» мĕн иккенне лайăх каласа кăтартма пултараҫҫĕ. Ҫав «хурал тăракан» чаҫсем, гитлеровецсем кăтартнă тăрăх, халăхран унăн юлашки тыррине тата ытти апат-ҫимĕҫне те ҫаратса илеҫҫĕ, халăха выçă вилĕмпе вилмелле тăваҫҫĕ. Венгри карателĕсем пĕр хӳтлĕхсĕр мирлĕ халăха тискеррĕн тыткалаҫҫĕ, хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасене вĕлереҫҫĕ, совет ялĕсене ҫунтарса ҫĕрпе танлаштарса хăвараҫҫĕ. Ҫак хурах пуҫнине, ҫак мирлĕ халăхпа вăрҫнине ĕнтĕ нимĕҫсем «хурал тăни» тесе калаҫҫĕ. Ҫакăн пек намăссăр усал ĕҫ туса тăрса, Венгри гитлеровецĕсем хăйсене хăйсем сурăх путекки пек кăтартма тăрăшаҫҫĕ, анчах та вĕсем сурăх путеккисем мар, фашистла бандитсемпе вăрă-хурахсем.

Венгрин Гитлера сутăннă пуҫпулса тăракан ҫыннисем вутпа выляҫҫĕ. Антив, выляччăр, кайран хăйсене хăйсем ӳпкелĕҫ. Хирĕҫ тавăрмалли вăхăт ҫитсен, вĕсем хăйсем мĕне тивĕҫлĕ пулнине пĕтĕмĕшпех илĕç.

Çуракине хатĕрленсе çитмелли фронтовой уйăхлăх

Ÿкерчĕк çинче: Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз председателĕн заместителĕ Ф. САЛАХЕЕВ юлташ. Председатель заместителĕ пулса вăл 3 çул ĕçлет. Иртнĕ çул вăл государствăна кооперации урлă 98 пăт тырă сутнă.

Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Бригадирсен курсĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). ВКП(б) райкомĕ пуçарнипе кунта бригадирсен курсне уçнă. Курсра малтанхи сменăра 35 çын вĕреннĕ, вĕсем 56 сехетлĕ программăпа вĕреннĕ. Çав вăхăтра вĕсем Сталин юлташăн Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа панă приказĕ çинчен, ялхуçалăх артелĕн уставĕ çинчен, агротехника ыйтăвĕсем çинчен, бригадăра ĕçе мĕнле организацилемелли çинчен лекцисем итленĕ, калаçусем туса ирттернĕ.

Халĕ кунта иккĕмĕш сменăна пухма тытăннă, унта 50 бригадир вĕренмелле.

Пысăк тухăçлă пахча-çимĕçшĕн

ИШЛЕЙ. «Çĕньял» колхозăн пахча-çимĕç бригади çуркунне пахча-çимĕçсем лартса хăварма вăйлăн хатĕрленет. Бригадăна овощевод А. Леонтьев ертсе пырать. Иртнĕ çул пахча-çимĕçсемпе çырласем сутса 445.668 тенкĕ тупăш илнĕ.

Кăçал пысăк тухăçлă пахча-çимĕç туса илес тесе, бригада çуракине тимлĕн хатĕрленет. Çав участока 800 лав тислĕк кăларнă, 146 парник хатĕрлесе хунă.

Ÿкерчĕк çинче: Сĕмĕрле районĕнчи «Комбайн» колхозри фермăсен заведующийĕ Д. В. КАРПОВ юлташ. Фермăсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана вăл 108 процент пурнăçланă.

Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Колхозсем пĕр-пĕрне вăрлăх парса пулăшаççĕ

ЕЛЧĔК. Районра вăрлăх çитмен колхозсене колхозниксем вăрлăхлăх тырă парса пулăшаççĕ. Ку ĕç районра пуçланса кайни нумаях пулмасть-ха. Апла пулсан та, паянхи кун тĕлне, туллимар данныйсем тăрăх, вăрлăх çитмен колхозсене пулăшма 204 пăт тырă пухнă. Хĕрлĕ Явалри Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз вăрлăх çитмен «Сатурн» колхоза валли 60 гектар акмалăх вăрлăх уйăрнă.

«Волна» колхоз председателĕ Журавлев юлташ Канаш районĕнчи вăрлăх çитмен колхозсене колхоз членĕсенчен пухса 90 пăт вăрлăх пама пулнă. «Красная Армия» колхоз (председателĕ Анкудинов юлташ) вăрлăх çитмен колхозсене 10 гектар акмалăх вăрлăх пама пулнă.

* * *

ЧКАЛОВСКОЕ. Уйрăм колхозсем вăрлăх çитмен пирки, кунта колхозсем пĕр-пĕринчен вăрлăх улăштарса илме тытăннă. Киров ячĕпе тăракан колхоз «Правда» колхоза 10 центнер, «Сăлтăр» колхоза «РОКК» колхоз 12 центнер параççĕ.

Анчах та, калас пулать, вăрлăх çитмен колхозсем те, Комсомольски районри «Трактор» колхозăн пайне вăйлăн илсе пыраççĕ. Тырă кивçен илекен колхоз пухассине çак вăхăтра пĕтĕмпех организацилемен-ха.

СЕНТЕРВАРРИ. Мартăн 3-мĕшĕнче ялхуçалăхĕнче малта пыракан районри канашлăвĕ пулса иртнĕ. Канашлура 1943-мĕш ялхуçалăх çулĕн итогĕсене умра тăракан задачăсем çинчен сÿтсе явнă. Районри колхозсен вăрлăхсем тырă çителĕклĕ, вĕсене тасатас тата кирлĕ пек кондицие лартас ĕç анăçлăн пырать.

Пĕр вак-тĕвек юлмиччен хатĕрлеççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Кĕчĕкĕ ялсоветĕнчи «Красный Корт» колхоз çуракине вăрçă вăхăтĕнчи тивĕçлĕхпе хатĕрленме тытăнчĕ. Колхозниксем çуракинче кирлĕ ĕç хатĕрĕсене пĕр вак-тĕвек юлмиччен хатĕрлеççĕ. Колхозăн пур вăрлăхсем те çителĕклĕ. Вĕсене аласа, сортласа, тивĕçлĕ кондицие лартнă. Халĕ ĕнтĕ вăрлăхсене таса складсене хурса, кладовщик аллине актпа çирĕплетсе панă.

Колхоз, çитес çул вăйлă тырпул туса илес тесе, хĕллехи агромероприятисене пурне те пурнăça кĕртсе пырать. Паянхи куна тислĕк кăлармалли плана пĕтĕмпех пурнăçланă. Ку ĕçре конюхсемпе ферма заведующийĕсем лайăх ĕçленине уйрăмах палăртмалла. Халĕ килĕрех кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухаççĕ. Çавăн пекех колхоз картишĕнче те кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухассине организациленĕ.

Ялхуçалăх машинисене пурне те юсанă. Ку ĕçре колхоз бригадирĕ Х. Волков питĕ тăрăшса ĕçлерĕ. Çуракинче уя вăрлăх турттарма çителĕклĕ михсем хатĕрленĕ. Халĕ колхоз çураки валли посылка авăртать. Лашасем валли утă-улăм, тĕштырăсем çителĕклĕ уйăрса хунă. Колхоз кăçал планран ирттерсе 10 гектар вика акма шутлать. Çапла колхозниксем, çуракине лайăх хатĕрленсе кĕтсе илсе, акана вăхăтра та лайăх ирттерессишĕн кĕрешеççĕ.

Н. АНДРЕЕВ.

Вырăнти удобренисем пухаççĕ

СĔНТĔР. Хĕрлĕ Çарăн фронтри чаплă çĕнтерĕвĕсем колхозниксене савăнтараççĕ. Çав çĕнтерÿсене ответлесе, «Красное Сормово», «Колос», «Свобода», «Çĕнĕ Юнкă» колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕçре социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Çак колхозсенче хĕллехи агромероприятисене пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пыраççĕ. «Колос» колхоз уйăхлăхра хире 2.320 лав тислĕк кăларнă. 80 центнер кĕл, 50 центнер фекали, 45 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. «Çĕнĕ Юнкă» колхозра хире тислĕк кăларасси уйрăмах юлашки кунсенче вăйланса кайрĕ. Кунта пурĕ планпа 2.100 лав кăларас вырăнне 3.413 лав кăларнă. 40 центнер кĕл, 30 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

Пушкăртри «Çĕнĕ çул» колхоз юлашки кунсенче кăна уя 822 лав тислĕк кăларнă, 11 центнер кĕл, 16 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Халиччен юлса пынă «Сеятель», Максим Горький ячĕпе тăракан колхозсем лайăх ĕçлеме тытăнчĕç. Кунта ик-виçĕ кун хушшинче уя 371 лав тислĕк кăларнă. **Т. ИВАНОВ.**

Малта пыракан колхозра

Кашни кăçах, ĕçрен пушаннă хыççăн, «Комбайн» колхоз правленине çынсем пуçтăранаççĕ. Вĕсем — паян мĕн тунипе ыран мĕн тумаллине сÿтсе-яваççĕ. Колхоз председателĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ Н. Кириллов юлташ, вĕсен пĕр кунхи ĕçĕсене пĕтĕçтерсе, ыран валли çĕнĕ заданисем парать.

— Çуракине хатĕрленесси халь тĕп вырăнта тăмалла. Мĕншĕн тесен кăçал вăйлă тырпул туса илесси çуракине тĕплĕн хатĕрленсе ăнăçлăн ирттернинчен килет, — тет вăл.

Колхозниксем ăна лайăх ăнланаççĕ. Çавăнпа вĕсем çуракине хатĕрленес ĕçе тахçанах тытăннă. Колхозăн пур тĕрлĕ вăрлăхсем те пур, вĕсене тасатса шăтарса пăхнă, вĕсем I-II-мĕш креслă кондицие лараççĕ; ялхуçалăх машинисем юсавлă, урапа тавраşĕсем те çителĕклĕ. Çуракинче ĕçлемелли лашасенчен начаррисем пĕрре те çук.

План тăрăх çак хĕлте колхозăн уя пĕр пин тонна тислĕк кăлармалла, 70 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 65 центнер кĕл пухмалла. ВКП(б) Обкомĕ йышăннă тăрăх пыракан фронтовой уйăхлăха хутшăнса, колхоз членĕсем çак кунсенчех çуракине пур енĕпе те тĕплĕн хатĕрлемсе çитме пулнă. Хăйсен сăмахне вĕсем тивĕçлĕн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Ку таринччен 1200 лав тислĕк кăларнă, 50 центнер ытла кĕл, çавăн чухлех кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрленĕ, 100 гектар çиниче юр тытнă.

«Комбайн» колхозра кăçал татах та тухăçлăрах—гектартан 100-шер пăт тырă туса илессишĕн кĕрешÿ пырать. Кашни колхозникпе колхозница кăçал та районра малти ретрех пырассишĕн вăя хурса ĕçлет.

Х. ЛИСИН.

СĔМĔРЛЕ р. (Хамăр корр.)

Вăкăрсем ĕçре

КАЛИНИНО. Ассакассинчи «КИМ» колхозри колхозниксемпе колхозницăсен пухăвĕ хĕсĕр ĕнесемпе вăкăрсене ĕçе вĕрентме йышăннă. Çак ĕçе Я. Трофимовпа А. Малова комсомолецсем хăйсем çине илнĕ. Вĕсем икĕ вăкăра ĕçе вĕрентрĕç. Кун хыççăн комсомолецсем ытти вăкăрсене те (3 вăкăра) кÿлсе çÿреме вĕрентрĕç. Унтан хĕсĕр ĕнесене вĕрентме тытăнчĕç. Халĕ вăкăрсемпе фермăри выльăхсем валли шыв кÿреççĕ, уя тислĕк кăлараççĕ тата ферма валли улăм турттараççĕ.

Б. ШОРНИКОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Чкаловски МТС-ри парторганизаци начар ĕçлет

МТС-сенче политотделсене пĕтернĕ хыççăн МТС-сенчи пуçламĕш парторганизацисен вырăнĕ татах та ытларах ÿсрĕ. МТС-сенчи парторганизацисем пĕтĕм МТС ĕçĕсемшĕн ответлă пулса тăраççĕ. Вĕсем МТС пурнăçĕнчи пĕтĕм ĕçсене активлăн хутшăнса пыма тивĕçлĕ. Анчах та Чкаловски МТС-ри пуçламĕш парторганизаци хăйĕн задачисене тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пымасть-ха. Вăл хуçалăхри ĕçсемпе сахал интересленет, ĕçре пулакан çитменлĕхсене пĕтерессишĕн çине тăрса кĕрешмест. Çавна пула ĕнтĕ Чкаловски МТС иртнĕ çулта тракторсемпе тумалли ĕçсен планне тултараймаи. Халĕ 1944 çулхи çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе те çителĕксĕр ĕçлет.

МТС-ри пуçламĕш парторганизаци ĕç дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе дирекцие сахал пулăшать. МТС-ра ĕç дисциплинине пăснисем пĕр хут кăна мар. Çапла, 1943 çулта прогулсем тунăшăн тата ĕçрен хăйсен ирĕкĕпе тухса кайнăшăн 32 çынна судпа айăпланă. Çакăн хыççăн та парторганизаци трактористсемпе комбайнерсене тата служащисене воспитани парас ĕçе тивĕçлипе организацилемест. Докладсем, лекцисем ирттересси, хаçат-журналсем вуласа парасси хутран-ситрен кăна пулаççĕ. Работниксене отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи хыпарсемпе тата тĕнчери лару-тăрупа тĕплĕн паллаштармаççĕ. Стена хаçачĕсем те йĕркеллĕ тухса тăмаççĕ.

Пуçламĕш парторганизаци работниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва организацилесси çине сÿрĕккĕн пăхать. Чăнах та унта ăмăрту договорĕсем тунă. Анчах вăл договорсене мĕнле пурнăça кĕртнине тĕрĕслемеççĕ. Малта пыракансен опытне трактористсемпе комбайнерсем хушшинче сармаççĕ. Кăтарту хăмисем çук. Коммунистсем хăйсем те дисциплинăна пур те мар çирĕппĕн тытса пыраççĕ, вĕсем ăмăрту организаторĕсем пулса тăман-ха.

Парти организацийĕсем умĕнче тăракан пысăк задачăсенчен пĕри вăл ВКП(б) ретне ÿстерсе пырасси тата çамрăк коммунистсене воспитани парасси пулать.

Ку тĕлĕшпе те Чкаловски МТС-ри парторганизаци çителĕксĕр ĕçлет. Вăл партре тăман активпа общественлă ĕçе явăçтармасть, вĕсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕç ирттермест. Иртнĕ çулта парти ретне 3 çынна çеç илнĕ. Çамрăк коммунистсене большевикла воспитани парас ĕç татах та начар пулса пырать. Парторганизаци ку таранччен те ВКП(б) Уставĕпе программине, ВКП(б) историне тата Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» çырнă кĕнекине вĕренес ĕçе организацилемест.

МТС-ра коммунистсен пухăвĕсене кирлĕ пек ирттерлемеççĕ. Коммунистсен пухăвĕсене вăхăтра ирттерменнипе пухусем МТС ĕçĕсене сахал сÿтсе яваççĕ. Пухусем йышăннă решенисене мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслемеççĕ. Çавна пула унта нумай решенисем хут çинче çеç юлаççĕ.

Пуçламĕш парторганизаци комсомол организацине кирлĕ пек ертсе пымасть. 1943 çулта комсомолăн пуçламĕш организацийĕн ĕçĕсем çинчен пĕр хутчен кăна сÿтсе явнă. Комсомол организацийĕ çамрăксене воспитани парас тĕлĕшпе начар ĕçлет. Комсомолецсен пухăвĕсем йĕркеллĕ иртмеççĕ, çамрăксене комсомола явăçтарасси сÿрĕк пырать. Апла пулин те, пуçламĕш парторганизаци комсомол ĕçне лайăхлатас енĕпе татăклă мерăсем йышăнман.

Асăннă фактсем ĕнтĕ ВКП(б) Чкаловски райкомĕ МТС-ри пуçламĕш парторганизацин ĕçĕсемпе сахал интересленни çинчен калаççĕ. ВКП(б) райкомĕн работникĕсем МТС-ра сахал пулаççĕ, пуçламĕш парторганизацине вăхăтра кирлĕ пулăшу памаççĕ.

Халĕ, çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе хĕрÿллĕ ĕçсем пынă чухне, МТС-ри пуçламĕш парторганизаци çавăн пек сÿрĕк ĕçленипе килĕшме çук. Парторганизацин МТС ĕçĕсемшĕн ответлăха туйса, мĕнпур работниксене çуракине лайăх хатĕрленессишĕн кĕрешме мобилизацилемелле. Ку ĕçре пуçламĕш парторганизацине ВКП(б) райкомĕн пулăшас пулать.

А. БРАНИЦЫН.

Çамрăк коммунистсен активлăхĕ

Калинино районĕнчи предприятисемпе учрежденисенчи тата колхозсенчи парторганизацисем ВКП(б) ретне малта пыракан çынсене илес тĕлĕшпе сахал мар ĕçсем тăваççĕ. Иртнĕ çулта 15 çынна члена, 74 çынна кандидата илнĕ.

Парторганизацисем çамрăк коммунистсене воспитани парас, вĕсен тавракурăмне ÿстерес енĕпе те тимлĕрех ĕçлеме тытăнчĕç. Мăн Явăрши Ленин ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш парторганизаци ВКП(б) членĕн кандидачĕсене тăтăшах уйрăм ĕçсем хушать, вăл ĕçсене мĕнле пурнăça кĕртнине тĕрĕслесе пырать, кирлĕ чухне пулăшу парать. Çавăнпа унта пур коммунистсем те парторганизаци ĕçне активлăн хутшăнаççĕ. Коммунист Мазанцев юлташ фермăсен заведующийĕ пулса ĕçлет. Вăл фермăсен ĕçне лайăх йĕркеленĕ. Иртнĕ çулта колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ирттерсе тултарнă.

Халĕ парторганизаци хăйĕн ĕçне çуракине большевикла хатĕрленес майпа организацилесе пырать. Коммунистсемпе комсомолецсене уйрăм бригадăсем çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем бригадăсенче агитациллĕ-массăллă ĕçе йĕркелесе пыраççĕ, ĕç вăйне тĕрĕс организацилеме пулăшаççĕ. Кашни бригадăрах боевой листоксем тухса тăраççĕ. Нумай колхозниксене агротехникăна вĕренмелли кружока явăçтарнă. Политикăллă-массăллă ĕçе тĕрĕс организацилени хуçалăхри ĕçсене вăхăтра тума май парать. Колхоз çуракине, тĕпрен илсен, хатĕр ĕнтĕ.

Алгазинăри «Чăваш Коммуни» колхозри пуçламĕш парторганизаци иртнĕ çулта ВКП(б) членне пĕр çынна, кандидата 8 çынна илнĕ. Коммунистсем Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» çырнă кĕнекине кружокра вĕренеççĕ. Кружокра уйрăмăнах учитель И. Кузьмин, Малти Кăкшăмри «Красный кавалерист» колхозăн председателĕ А. Ефремов, Алгазинăри «Чăваш Коммуни» колхозăн председателĕ И. Капитонов коммунистсем тăрăшса вĕреннĕ. Вĕсем халĕ вĕренÿре туяннă пĕлÿне кулленхи ĕçре усă кураççĕ. И. Капитонов юлташ председатель пулса ĕçлекен «Чăваш Коммуни» колхоз уборка ĕçне вĕçленĕ хыççăнах çуракине хатĕрленме тытăннă. Хире 1.950 лав тислĕк кăларнă тата вырăнти удобренисене те чылай пухнă. Ялхуçалăх машинисемпе ут таврашĕсене те юсаса пĕтернĕ.

Анчах та парти ретне илес тата çамрăк коммунистсене вĕрентсе воспитани парас тĕлĕшпе пур парторганизацисем те лайăх ĕçлеççĕ теме çук-ха. Çавалкассинчи «Çуталла», Çĕньял Явăшри «Çĕньял» колхозсенчи кандидатсен групписем чылайранпах вичшер çынран кăна тăраççĕ. Вĕсем партие çĕнĕ çынсем илес ĕçе тивĕçлипе организацилемен, ĕçсыннисем хушшинче массăллă ĕçе йĕркелемен. Кандидатсен групписен руководителĕсем Т. Беловпа А. Ершов юлташсем пухусене вăхăтра ирттермеççĕ. Райсовет исполкомĕ çумĕнчи пуçламĕш организаци те (секретарĕ В. Игнатьев) çамрăк кадрсене коммунистла воспитани парса çитĕнтерес тĕлĕшпе сахал ĕçлет.

Районри колхозсенче малта пыракан, ĕçре тĕрĕсленнĕ тата шанчăклă çынсем сахал мар. Пуçламĕш парторганизацисен вĕсене парти ретне явăçтарса, колхозсенчи парторганизацисен йышне ÿстерме тăрăшмалла.

З. ЗАЙЦЕВ.

Малта пыракан çамрăксем комсомола кĕреççĕ

Юлашки кунсенче Куславкка комбинатĕнчи ВЛКСМ организацине 20 çамрăк хутшăнчĕ. Ленинла-Сталинла комсомол ретне çĕнĕрен илнисем хушшинче комбинатăн чи лайăх ĕçлекен çамрăкĕсем: Е. Матвеева—вăл ĕç нормине тăтăшах 200 процент тултарать, Ф. Камагин—производство планне 280 процента çити тултарать, çавăн пекех П. Мартыновпа Г. Моисеев юлташсем те ĕç нормине тултарса ĕçлеççĕ.

ВАГАНОВА,
(«Куславкка комбиначĕ» хаçатран).

Йывăç çапписемпе выльăх апачĕ вырăнне усă курасси

Хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрленĕ чухне йывăç çаппиcене ахалех çунтарса яраççĕ. Çав вăхăтрах вĕсене пухса илсе, выльăх апачĕ вырăнне усă курма май пур. Йывăç çаппи лайăх апат шутланать. Вăрман касна çĕрте пĕр гектар çинчех выльăхсене çитерме юрăхлă çапă—10—15 тонна таран пухма пулать.

Выльăх апачĕ вырăнне çирĕк, шĕшкĕ, çăка, çÿçе, вĕрене, хурама, хурăн, ăвăс т. ыт. йывăçсен çаппиcемпе те усă курма юрать. Хĕллехи вăхăтра хатĕрленĕ пĕр сантиметртан вĕтĕрех йывăç çапписем вăтам лахалăхла утăпа танлашаççĕ, çуртри улăмĕнчен чылай лайăхрах шутланаççĕ.

Выльăхсене çитермешкĕн 1 сантиметр хулăнăшĕнчен вĕтĕрех çапăсене 1—2 сантиметр тăршшĕ тураса хатĕрлемелле. Ун хыççăн çав турана çаппа 1—2 сантиметр тăршшĕнчен шултрараххисене суйласа хăваракан ала пек япалапа аласан аван. Тураса соломорезкăпа е пуртăпа та турама юрать. Выльăхсем лайăхрах çиччĕр тесен, çитерес умĕн турăса вĕтетнĕ çаппа 4—8 сехет хушшинче кормозапарникре пĕçермелле. Кунсăр пуçне тата пысăк чансем çине тултарса, хăйне хăй хĕртсе лартсан лайăх апат пулать. Ана çапла тумалла: тураса вĕтетнĕ çаппа хытă таптаса тултармалла, пĕр тоннă çапă пуçне 7 витре вĕри шыв ярса 2—3 кун хушши лартмалла. Вара вăл 60—70 градуса çити вĕриленет, ун хыççăн вăл выльăхсем юратса çиекен çемçе апат пулса тăрать.

Çапăран татах та сĕтеклĕрех апат тума пулать. Тураса вĕтетнĕ çаппа каткана е чана тултарса, çавăн пекех вĕри шыв сапса темиçе сехетлĕх лартаççĕ. Вĕри 55—60 градуса çитсен, пĕр тонна çапă çине 3—4 витре салат шывĕ сапаççĕ. Салат шывне пĕр витре шыв çине пĕр килограмм типĕ салат ярса хатĕрлемелле. Çавăн пек туса хатĕрленĕ апат, сахăрланнисĕр пуçне, çемçе те тутлă шăршлă пулать. Ăна выльăхсем питĕ юратса çиеççĕ. Салат шывĕпе сахăрлантарнă çапă туранчăкне çĕпрепе йÿçĕтме те май пур.

Пĕр сантиметртан хулăнрах çаппа сурăхсене, качакасене, тихасене, лашасене те тÿрех пама юрать. Çавăн пек чухне вĕсем йывăç хуппине кăшласа çиеççĕ. 5—10 сантиметр хулăнăш ăвăс, çирĕк, çÿçе, тополь йывăççисен тураттисенчен хуппине сÿсе пама пулать. Çамрăк ăвăспа тополь йывăççисен хуппиcенче тутă тытакан япаласем утăннинчен те ытларах шутланаççĕ. Вĕсене те пĕçерсе пама юрать, анчах авăртса çăнăх тусан тата лайăхрах пулать. Йывăç хуппинчен авăртса хатĕрленĕ çăнăх тутă тытас тĕлĕшпе концентратсемпех танлашать.

Çапăсенчен хатĕрленĕ апата майĕпе хăнăхтарса пынă хыççăн ĕнесене кунне 6—8 килограмм таран, ĕçлекен лашасене 4—5 килограмм таран, сурăхсене 1,5 килограмм пама юрать.

Зооветтехникумра выльăхсене çапă апатне 1943 çулхи кĕркуннерен пуçласа çитереççĕ. Йывăç çаппипе тăрантаракан выльăхсем сывлăх тĕлĕшĕнчен те аптрамаççĕ. Ăвăс, çирĕк, çÿçе, хăва çаппиcем çиекен сурăхсем, малтан лĕпĕпе чирленĕскерсем, юсанса пыраççĕ. Çапă çимен сурăхсем лĕпĕпе чирлеççĕ. Кунсăр пуçне, сăнанă тăрăх, çапă апачĕ çиекен выльăх-чĕрлĕхĕн продуктивноçĕ те ÿссех пырать.

Вăрман çывăхĕнчи колхозсен выльăхсене йывăç çаппиcемпе те тăрантармалла. Çапăсем начар мар апат шутланаççĕ. Вĕсемпе анлăн усă курмалла.

Я. СЕМЬЯНОВ,
Вăрнарти зооветтехникум директорĕ.

Чăваш писателĕсем колхозниксемпе вĕренекенсем патĕнче

Чăваш поэчĕ Стихван Шавлы Красноармейски районри колхозсемпе шкулсенче вуникĕ вечер туса ирттернĕ. Вăл вăрçă вăхăтĕнчи тăван литературăпа паллаштарнă тата хăйĕн «Йыхрав», «Поэт сасси» ятлă кĕнекисенче пичетленнĕ сăвăсене вуласа панă.

Етĕрнери педучилищĕре чăваш писателĕсем Л. Агаков тата Н. Тукташ юлташсем вечер туса ирттернĕ. Вĕсем вĕренекенсене чăваш литературипе тата хăйсен произведенийĕсемпе паллаштарнă.

Чăваш писателĕсемпе поэчĕсем колхозсенче, шкулсенче пулни—кирлĕ те паха ĕç. Писательсемпе поэтсем вечерсем ирттерни тăван литературăна халăх хушшине ытларах сарма, литература кружокĕсен ĕçне лайăхлатма пулăшать. Çапла Красноармейски районри шкулсенче юлашки вăхăтра кăна темиçе çĕрте литература кружокĕ организациленĕ.

Чăваш совет писателĕсен Союзĕн правленийĕ писательсемпе поэтсен вечерĕсене тăтăшах ирттерме палăртать.

Вĕренекенсем валли лекцисем

Калининăри педагогика училищинче вĕренекенсем валли тăтăшах лекцисем ирттереççĕ. Юлашки вăхăтра кăна унта 6 лекци ирттернĕ. Отечественнăй вăрçă инваличĕ К. Воронов юлташ хăй вăрçă фрончĕсенче курнисем çинчен каласа панă. Преподаватель Ф. Кузьмин юлташ «Вырăссен генийллĕ полководецĕ Александр Суворов» темăпа лекци вуларĕ.

Б. ШОРНИКОВ.

Ют çĕршывсенче

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен Анцио патĕнчи позицийĕсене ÿпĕнтермелли тăрăшнă тăшман çарĕсем. Американецсен 5-мĕш армийĕн тĕп фронтĕнче патрульсен çапăçăвĕсем тата тăшмана хирĕç артиллери персе тăнă. Енер авиаци пысăк соединенийĕсем плацдарм районĕнчи тăшман позицийĕсене тапăннă. Союзниксен истребителĕсем Югославин çыранĕсен патĕнче тăшман судноне путарнă.

ГИТЛЕРЛА ЧУРА ХУÇИСЕМ ИТАЛЬЯНЕЦСЕН ПĔР МИЛЛИОН РАБОЧИНЕ МОБИЛИЗАЦИЛЕМЕ ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

Италири фашистла хирĕçле пичет пĕлтернĕ тăрăх, гитлеровецсем Сурçĕр Италире Германие пĕр миллион рабочи пухма йышăннă. Италири Гитлера пулăшса тăракан фашистсем çак ĕçре нимĕçсен чура хуçисене пур майпа та пулăшаççĕ. Итали фашисчĕсен хаçачĕсем Германире пурнăça мухтаса çыраççĕ.

Анчах та гитлеровецсем тума хăтланакан мобилизацие рабочисем питĕ хытă хирĕç тăраççĕ. Çавăн пирки фашистла полици агенчĕсем Сурçĕр Италире çынсене йышлăн çавăра-çавăра илеççĕ. Рабочисене тытаççĕ. (ТАСС).

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чăсĕсем оккупантсен Словени Приморьинче пуçласа янă наступленине чарса лартнă. Тăшмана пысăк çухатусем кÿнĕ.

Февралĕн 26-мĕшĕнче тăшман танксем пулăшнипе Глина хулине йышăннă. Анчах та тепĕр кунне, гитлеровецсене çапăçура авиаципе танксем пулăшса тăнă пулин те, халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чăсĕсем çав хулана каялла туртса илнĕ, хăйсен унчченхи çухатнă позицийĕсене каялла таварнă. Тăшманăн ку участокра пуçласа янă наступленийĕ путланса ларнă. Юлашки кунсенче сербсен 12-мĕш бригади, черногорецсен 6-мĕш бригадипе пĕрле кĕрешсе, тăшмантан Рудинене тасатнă тата Вилюсене йышăннă. Тăшмана пысăк çухатусем кÿнĕ, вара вăл Требинья еннелле чакнă.

16-мĕш дивизи чăсĕсем икĕ кун хушши пынă çапăçусенче тăшмана аркатса тăкнă, вăл Брчкоран Биельине еннелле татса кĕме хăтланнине пĕтерсе лартнă. Çав çапăçусенче 200 усташана ытла пĕтерсе тăкнă.

ЛĂПКА ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, Адмиралтейство утравĕсен Сурçĕр-Хĕвелтухăç пайĕнче (Бисмарк архипелагĕнчен çурçĕртерехре) союзниксен çарĕсем пысăк чăсĕсем анса ларнă.

Англин Лăпкă океанра кĕрешекен подводнăй лодкисем Японин 10.000 тоннăпа яхăн таякан авианосецне торпеда ярса путарнă, пĕр крейсерне сиенленĕ.

СОВЕТ СОЮЗĔПЕ ГЕРМАНИ ФРОНТĔНЧЕ ГИТЛЕРОВЕЦСЕН ПАЛЛА ПУÇЛĂХНЕ — ГАБИХТА ВĔЛЕРНĔ

ЖЕНЕВА, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинран официально çапла пĕлтернĕ: Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче Невель хули районĕнче Германин ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин статс-секретарĕн заместителĕ пулнă Теодор Габихта вĕлернĕ.

ЯССЫ ХУЛИНЧЕ ВЫРĂНТИ ХАЛĂХПА ГЕРМАНИ ÇАРĔСЕМ ТЫТĂÇСА ИЛНĔ

ГЕТЕБОРГ, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). «Гетеборгс постен» ятлă хаçат Румынири Яссы хулинче вырăнти халăхпа Германин çар чăсĕсем хушшинче хĕçпăшаллă тытăçу пулса иртни çинчен пĕлтерет. Тытăçу акă мĕн пирки пулнă: нимĕçсем хулари пĕтĕм халăхран апат-çимĕçпе ытти цурлăхя, çавăн пекех тата нимĕç çарĕсене вырнаçтарма халăх пурăнакан нумай çуртсене туртса илме тытăннă.

КĔСКЕН

● Алжир хулинче (Алжир) Виши «правительствинче» шалти ĕçсен министрĕ пулса ĕçленĕ Пьер Пюшене суд тума пуçлаççĕ. Ăна тăшмана сутăнна тесе айăплаççĕ.

● Стокгольм хули портĕнче Германирен килнĕ пĕр судно тăрать. Вăл тимĕр тиенĕ. Халăх çакна асăрханă: судно çинче тупăсемпе пулеметсем лараççĕ. Пурнинчен те паллăраххи вара çакă: тупă расчечĕсем апат хыççăнхи вăхăтра палуба çинче занятисем тăва-тăва ирттереççĕ.

● Вăрçă пуçланăранпа çак иртнĕ февралĕн 7-мĕшне çитиччен мĕнпур фронтсенче Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсен 118.128 çын пĕтнĕ. Вăл шутран 19.499 çын вилнĕ, 26.745 çын тыткăна лекнĕ. (ТАСС).

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактора — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

ИГ 00364 Типографи №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. Тираж 14.400 экз.